**Хам илтни-курнисенчен**

Асаилӳ

**Пысӑк метеорит курни**

Манӑн Павӑл ятлӑ тӑван пичче пурччӗ. Патвар та вӑйлӑ йӗкӗтчӗ вӑл. 1908 е 1909 ҫулти хӗл ларнӑ вӑхӑтра, тин ҫеҫ юр ҫуса хытӑ шӑнтнӑ хыҫҫӑн, ноябрь вӗҫӗнче е декабрь пуҫламӑшӗнче пулас, атте ҫав Павӑл пиччене ял тулашӗнче ларакан ҫил арманне ыраш авӑртма ячӗ.

Ҫур каҫ иртсен ырашне авӑртса пӗтернӗ хыҫҫӑн Павӑл ҫурранах киле килме тухнӑ. Ҫил арманӗнчен хамӑр киле ҫитме пӗр ҫур ҫухрӑм пулӗ — уйпала тата анкарти хыҫӗсемпе таврӑнмалла... Уйра тӗттӗм каҫ вӑл ахаль те каш-кӑр е вӑрӑ-хурах таврашӗ тӗл пуласран хӑраса пынӑ ӗнтӗ. Ҫав самантра Павӑл сасартӑк тӗттӗм ҫанталӑк тӳпи ҫап-ҫутӑ ҫуталса кайнине курать. Хыҫалалла пӑхрӑм тет те Йӗпреҫпе Канаш хушшинчи чукун ҫул тӑрӑх ларакан вӑрман ҫийӗн вутлӑн-хӗмлӗн ҫатӑртатса пыракан пысӑк вӗри ҫӗлене курах кайрӑм тет. Вут ҫӗлен хыҫӗнчен сарӑллӑ-кӑвааклӑ тӗтӗм евӗр хӳре тӑсӑлса пырать тет. Вут ҫӗлен кӑнтӑр-хӗвел анӑҫӗнчен ярӑнса килсе ҫурҫӗр-хӗвел тухӑҫ еннелле вӗҫет тет. Пырсан-пырсан ҫав вут ҫӗлен шарт! турӗ тет те икӗ пая уйрӑлса татах та аялалла анчӗ тет, икӗ пайӗнчен те ҫӗр ҫинелле шӑраннӑ тӑхлан юхнӑ пек темскер юхса, шатӑртатса пырать тет. Сехри хӑпнӑ Павӑл сӑх сӑха-сӑх сӑха, турра асӑнса чупатӑп тет. Ҫак вут ҫӗлен вара таҫта тӗнче хӗрринелле вӗҫсе анса хӑвӑрт сӳнсе ларчӗ тет.

Хӑраса чунӗ тухас пек пулнӑ Павӑл пӳрте вӑркӑнса кӗчӗ те мӗн курнине сывлӑшне ҫавӑраймасӑр каласа пачӗ. Унӑн сӑнӗ-пичӗ шурса кайнӑ, пысӑк та чакӑр кӑвак куҫӗсем ҫиҫсе чалкӑшаҫҫӗ. «Ах турӑ... ах турӑ! Пӗтеттӗм вӗт! вӗри ҫӗлен кӑштах ҫунтарса яратчӗ!» — тет вӑл сасартӑк ыйхӑран вӑратса янӑ пӗтӗм ҫемьене.

Ун чух эпир ӑна пурте вӗри ҫӗленех тесе ӗненнӗ ӗнтӗ.

Каярахпа тин эпӗ ун пек япала вӑл — вӗҫсе пыракан чул катӑкӗ — метеорит е болид пулать тенине ӑнланса илтӗм.

Тата нумай пулмасть пӗр темле научнӑй журналта шӑпах ҫав 1909 ҫул кӗркунне пысӑк метеорит пирӗн тӗлтенех вӗҫсе иртсе сывлӑшра ҫунса пӗтни ҫинчен ҫырнине те вуланӑччӗ. Пирӗн Павӑл ҫав метеорита курнӑ пулмалла.

**Тепĕр метеор — вĕри çĕлен**

1935 е 36-мĕш çулта пулас. Август уйăхĕнче эпĕ хамăрăн тăван яла, Упакассине, курма тесе кайрăм. Ĕç çи вăхăчĕ. Август уйăхĕнче пирĕн хĕвел анса ларсанах хăвăрт тĕттĕмленме тытăнать. Ял çыннисем уйран тырă вырса таврăннă хыççăн апатланаççĕ те часах выртса çывăраççĕ.

Пирĕн Павăл пичче çемйи те апат çиме хатĕрленет. (Пичче хăй çук, вăл вилнĕччĕ ĕнтĕ.) Унăн çемйинче арăмĕпе ачисем анчах. Инке патне кӳршĕри пĕр арăм пынă та, кил хушшинчи лаç умĕнче халлапа çапса ларатпăр.

Çанталăк тĕттĕмленчĕ. Уяр тӳпере çăлтăрсем çуталчĕç. Сасартăк тӳпе тăрăх пĕр пысăк метеор ялтăртатса хĕвел анăçĕнчен тухăçалла вĕçсе кайни курăнчĕ. Вăл сӳнмерĕ: ялкăшса вĕçсе инçетри горизонталла кайрĕ те кӳршĕсен хуралтисем тĕлне пулса куçран çухалчĕ. Манпа пĕрле ларакан хĕрарăмсем хăраса кайрĕç: «Ай турах! Çырлах, турă! Усал-тĕселтен хăтар!»—тесе сăх сăхса та илчĕç. Метеор юнашар кӳршĕсен çӳллĕ ампарĕ тĕлне пулса çухалсанах инке çапла каласа хучĕ:

— Куртăр-и? Ку вĕри çĕлен тӳрех Матрӳне кил хушшине ярăнса анчĕ! Çавăн патне килчĕ!— терĕ вăл, çӳçенсе кайнăскер.

— Чăнах çавăн патнех килчĕ! Акă вĕт, хамăр куçпах куртăмăр,— тесе çирĕплетрĕ инке сăмахне кӳршĕ арăмĕ.

— Ахальтен каламаççĕ çав: ăна вĕри çĕлен ернĕ тесе сăмах тухрĕ. Вăт, чăнахах ку!— теççĕ вĕсем.

Эпĕ лайăх пĕлетĕн: инке çемйинчен пĕр кил урлă çех Матрӳне ятлă тăлăх арăм пурăнать. Вăл 35 çулалла çитнĕскер, ача-пăчасăр-мĕнсĕр, пĕр чăлах йăмăкĕпе çех пурăнатчĕ. Ун патне темиçе çул хушши тарçăра пурăннă Мартын Çеркейĕ ятлă харсăр та ĕçке ернĕ арçын киле пырса кĕнĕччĕ. Çеркейпе иккĕш вĕсем ик-виçĕ çул хушши арлă-арăмлă пекех пурăннăччĕ. Анчах Матрӳне чахоткăпа чирлесе хĕне каять тата вăл Çеркейне пĕрмаях ĕçнĕшĕн текех ӳпкелешме тытăнать. Хĕрарăм чирленине кура тата вăл текех вăрçнăшăн кӳренсе Мартын Çеркейĕ çак арăма пăрахать те урăх хĕрарăмсемпе пурăнма тытăнать. Çакăн пирки пĕччен юлнă Матрӳне чăнах та тунсăхлама пуçланă ĕнтĕ. Вăл тĕлĕкре те тăтăшах Çеркейне курса аташнă пулас. Хĕне кайса начарланнăскер, çынсене те

хăех мана вĕри çĕлен ерчĕ пулмалла тесе каланă пулас. Çакна пула пĕтĕм кӳрĕше «Матрӳнене вĕри çĕлен ернĕ» сăмах сарăлнă. Халь ĕнтĕ пирĕн инкесем те çак сăмаха ĕненнĕ. Вĕсем эпĕ ыйтнине пула Матрӳне усал чирпе начарланса çитни çинчен, вăл кĕç-вĕçех вилес пек пурăнни çинчен каласа пачĕç. Эпĕ вĕсене халь кăна тĕттĕм тӳпе тăрăх ярăнса вĕçнĕ вутлă япала вăл нимĕнле вĕри çĕлен те мар, ӳкекен чул катăкĕ сывлăша сĕртĕнсе çунса пыни çинчен каласа патăм. Питĕ лăпкăн та ăнланмалла каларăм эпĕ вĕсене. Анчах та ку хĕрарăмсем мана пур пĕрех ĕненмерĕç:

— Çук, çук, мĕнле чул катăкĕ пултăр?! Вĕри çĕленех вăл! Мĕншĕн апла çав Матрӳнесен кил картишнех анчĕ вăл? — теççĕ вĕсем манпа тавлашса.

— Анмарĕ вăл. Таçталла питĕ çӳлтен, инçетелле вĕçсе кайрĕ. Çурт тĕлне пулса çухалнипе çеç Матрӳне килне аннă пек туйăнчĕ, — тесе ăнлантаратăп инкесене.

Анчах темĕн пек тăрăшса ăнланмалла каласа парсан та ман инкесем хăйсен ĕненĕвĕпех юлчĕç:

— Çук. Çук, эс каланă пек мар! Хамăр куртăмăр: вĕри çĕлен вăл, Матрӳне патнех анса ларчĕ. Акă илтĕн-пĕлĕн: Матрӳнене кĕçех вĕлерет çак усал сывлăш. Халĕ те ун тирĕпе шăмми çех тăрса юлнă,— терĕç вĕсем.

Эпĕ вĕсем мана чĕререн ĕнентерме тăрăшнине кура аптранипе кулса кăна ятăм.

— Ан кул! Ан кул! Асту, хăвăн та темĕн курса ларасси пулĕ ак! — тесе хучĕç вĕсем мана хăйсене ĕненменшĕн тарăхса.

*Элкер, С. Хам илтни-курнисенчен : [аса илӳ] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 280-282.*